**“Радиохум – хаçат страницинче. Халăх тата влаç: тĕллевсем пĕр пек, ĕçсем те пĕрлех”**

# Ыйтусем тухсах тăраççĕ

Хăвăрт улшăнать паян пурнăç. Çĕнĕрен те çĕнĕ саккунсем те тухсах тăраççĕ. Пур чух ял çынни пĕлсе те юлаймасть вĕсем çинчен. Хамăр çĕршывра, республикăра, районта пулса иртекен çĕнĕлĕхсене те вăхăтра пĕлни хамăршăнах лайăх. Пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçнă чух вара чуна ыраттаракан ыйтусем те çиеле тухаççĕ. Вĕсене май килнĕ таран хăвăртрах татса памалли çулсене те



пĕрле тупма çăмăлтарах. Çав тĕллевпе пирĕн районта информаципе художество ушкăнĕсем йĕркеленнине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ.

Информаци ушкăнĕсемпе пĕрле малтанах уй-хире концертпа вырăнсенчи культура ĕçченĕсем тухрĕç. Районта пурăнакансемшĕн вара вырма вăхăтĕнче районтан килекен агитбригадăн концерчĕ яланах кĕтнĕ парне пулнă. Хальхинче те вĕсем районти “артистсен” пултарулăхĕпе паллашас кăмăллă иккен. Çакна шута илсе юлашки вăхăтра пулса иртнĕ тĕл пулусем хыççăн районти Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленĕ “Расна” эстрадăпа фольклор ушкăнĕ тухса çӳрерĕ ял ĕçченĕсем патне.

Çакă тӳрех курăнчĕ. Ял çыннисем “районтан килекенсемпе” тĕл пулма яланах хавас. Ыйтусем те вĕсен çителĕклех иккен. Мăн Хураçка енче пурăнакансем ав Мăн Хураçкаран Муркаша çити автобус çӳреме пуçласса кĕтеççĕ. Тяпакассисемпе Тренккăсене икĕ ял хушшинчи кĕпере юсасси канăç памасть. “Хлеборобри” пĕлтĕрхи, “Волгăри” кăçалхи ĕç укçи ыйтăвĕ çивĕч пулни палăрчĕ. Тренккăри Культура çурчĕн çивиттине улăштарас ыйтăва та çĕклерĕç тĕл пулура.

Ытти çĕрти пекех, Чуманкасси тăрăхĕнчи çынсене “Ĕç ветеранĕ” ят парас йĕрке интереслентерет. Ку тăрăхри икĕ ял хуçалăх предприятине пĕрлештерсен аван пулмасть-ши? Ку ыйту та пур çак тăрăхсен. Хуçасăр йытăсем те йышланнă иккен кунта. Уйрăм предпринимателĕн выльăхсене пуснă хыççăн юлакан йĕркесĕрлĕх те пăшăрхантарать ял çыннисене.

Вăрманкас Хачăкра шыв ыйтăвĕ кун йĕркинчен каймасть тата ытти те. Кашни ял тăрăхĕнче, кашни хуçалăхра иртнĕ тĕл пулурах тĕрлĕ ыйтусене хускатрĕç ял ĕçченĕсем. Иртнĕ кĕçнерни кун вара информаципе художество ушкăнĕсем Çатракасси тата Ярапайкасси ял тăрăхĕсенче пулчĕç. Кусем ятарласа çирĕплетнĕ графикпа килĕшӳллĕн йĕркеленĕ юлашки тĕл пулусем пулчĕç. “Свободăра” информаципе художество ушкăнĕ Йӳтĕркассинчи, Кашмашри, Çатракассинчи йĕтемсем çинче ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕ.

Çакна палăртса хăвармалла. Кашни ял тăрăхĕнче, хуçалăхра иртнĕ тĕл пулусене район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов хăй хутшăнчĕ. “Свобода” хуçалăхра иртнĕ тĕл пулура Юрий Александрович пухăннисене районти ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ. Ял хуçалăхĕнчи лару-тăру çинче уйрăммăн чарăнчĕ. Мĕншĕн тесен ытти отрасльсем япăх мар аталанаççĕ. Ял хуçалăхĕнче вара йывăрлăхсем çителĕклех. Районти ял хуçалăх предприятийĕсенчен çурри ура çинче çирĕп тăрать пулсан, тепĕр çуррийĕ пирки ун пек калама чĕлхе çаврăнасшăнах мар.

– Кунтан инçех мар вырнаçнă Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăх шăпи мĕнле килсе тухнине Кашмашсемпе Çатракассисем аван пĕлеççĕ.

– Телее, эсир çав хуçалăх ĕçченĕсен нушине курмастăр. Çавăнпа та сирĕн хуçалăхăн малашнехи аталанăвĕ те пĕр хăвăртан, хăвăр епле ĕçленинчен килет, – палăртрĕ район пуçлăхĕ тĕл пулура.

Йывăрлăхсем вара сирĕн хуçалăхăн та çук мар. Кăçалхи пек сирĕн хуçалăха айккинчен килсе ĕçлени пулманччĕ-ха. Ку ӳкерчĕк çур акинче механизаторсем çитменнинчех курăнчĕ. Сирĕн хуçалăх территорийĕнче пурăнакансем пĕчĕккĕн ял хуçалăх ĕçĕнчен пăрăнни пирки калать çакă.

Ăнланмалла, паян хуçалăхра ĕçлесе илнĕ 2-3 пин тенкĕпе пурăнма çук. Çавăнпах та пулĕ çамрăк, вăй питти арçынсем аякка кайса ĕçлеме пуçларĕç. Ĕç укçи проблеми асăннă хуçалăх территорийĕнче те пурри кунта иртнĕ тĕл пулусенчен те курăнчĕ.

Март уйăхĕнче ĕç укçи илнĕренпе урăх илсе курман, – терĕç йĕтем çинче ĕçлекенсем.

-Хăть улăм та илсе юлаймарăмăр-çке. Йӳтĕркасси уйрăмĕнче рулонланă улăма Йӳтĕркассисене пач та памарĕç, – пăшăрханчĕç хĕрарăмсем. – Ĕç укçине выльăх-чĕрлĕх пăхакансем илеççĕ. Пире валли çук.

Чăннипех те, çăмăл мар паян ял хуçалăх предприятийĕсене. Пĕтĕм ĕçе вăхăтра туса ирттермелле. Йăлтах укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çапах та ĕçе çын укçа ĕçлесе илес тесе утнине те асрах тытмалла пек. Вăл кама мĕн чухлĕ тухнине бухгалтери ĕçченĕсен çынсем ĕçленĕ вырăна тухса ăнлантарсан, хуçалăхра ĕçлекенсем хăйсене мĕн чухлĕ укçа тухнине те пулин пĕлнĕ пулĕччĕç. Хальлĕхе кунта ун пирки калаймарĕç.

– Пирĕн вырăнтах çынсене йĕркеллĕ ĕçлесе илме майсем туса памалла, – терĕ Юрий Александрович. – Мĕншĕн тесессĕн аякка ĕçлеме кайни тӳнтер енсемсĕр мар. Мускава кайса укçасăр таврăнакансем те пур. Ку çур инкек. Унтан та хăрушăраххи – унтан тупăкра килекенсем те çук мар. Мăшăрĕсем час-час аякка тухса кайни çемье саланасси патне илсе пырать. Çамрăк хĕрарăмсемех эрех черкки енне сулăннă тĕслĕхсем пур.

Çав хушăрах районти “Моргаушская” МСО-ра, “Сеспельте”, районти шкулсен çивиттийĕсене витнĕ çĕртех çав укçана ĕçлесе илме пулать. Çавăнпа пĕрлех çакна та каласа хăвармалла. 2008–2012 çулсенче районти ял хуçалăхне аталантармалли тата ял хуçалăх продукцийĕпе, чĕртавар, апат-çимĕç рынокне йĕркелесе тăрассин Программинче те ял хуçалăх ĕçченĕсен ĕç укçине самай ӳстермеллине пăхса хăварнă.

– Унсăрăн ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем юлмаççĕ, – палăртрĕ Юрий Алесандрович иртнĕ эрне кун депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр ларăвĕнче.

Ĕç укçисĕр пусне ытти ыйтусем те хускатрĕç тĕл пулура.



– Ял тăрăхĕн администрацине Çатракассине куçармаллаччĕ.

– Кашмашри фельдшерпа акушер пунктĕнче ĕçленĕ Л.М. Ивановăна каяллах хамăр пата куçармаллаччĕ. Çав тери кăмăллă, халăхпа ĕçлеме пĕлетчĕ вăл.

–Пирĕн умри çырма ишĕлет. Мĕнле чармалла?

– Çăлсем кирлĕ урамра.

Кашмашсен ыйтăвĕсем кусем. Асăннă хуçалăхра ĕçлекен Шетмĕпуç çыннисен хăйсен нуши.

– Шыв башнине ял тăрăхĕ çине куçармаллаччĕ.

–Хуçалăх пурлăхне ăçта мĕн чухлĕ сутнине халăха уççăн пĕлтермеллеччĕ.

– Пушар машинин шăпине татса памаллаччĕ.

Пур ыйту çине те хурав пачĕç. Тĕл пулура хурав пама май çук ыйтусене тивĕçлĕ хуравсем пама палăртрĕç. Тĕл пулура çавăн пекех ял çыннисем Кашмаш шкулĕн пректне тума пуçлани, Çатракассинче клуб пулас шанчăка çухатма кирлĕ маррине пĕлчĕç.

“Расна” артисчĕсем юрăташăпа савăнтарчĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

**Район прокуратуринче**

## Шкул автобусĕсене тĕрĕсленĕ



Кăçалхи июль уйăхĕнче «Вĕрентӳ» – «Ялти шкул автобусĕ» наци проектне пурнăçа кĕртессипе вырăнсенче законодательствăна мĕнле пăхăннине тĕрĕсленĕ. Çавна палăртнă: района шкулсем валли уйăрса панă пур автобуссен те уйрăм çитменлĕхсем пур. Çирĕплетсе панă пĕр автобус та требованисене тивĕçтермест. Сăмахран, КАВЗ автобуссем çинче хăвăртлăх виçине кăтартакан паллăсем çук, кузов айккинче, малта тата хыçалта «Ачасем» тесе çырса хунисене вырнаçтарман. Кантăксем ГОСТ требованийĕсене тивĕçтермеççĕ. Кунпа пĕрлех хăш-пĕр шкулсенчи должноçри çынсем автобуссен техника тĕлĕшĕнчи йĕркелĕхне тĕрĕслесе тăрасси çине алă сулаççĕ. Акă, Турай шкулне çирĕплетсе панă автобуса çур çул ытла ĕнтĕ техосмотр тăратман. Ытти çитменлĕхсем те пур. Тĕрĕслев итогĕсемпе представленисем тăратма тиврĕ. Прокурор представленисенче кăтартса хăварнă çитменлĕхсене пĕтермесен ертӳçĕсене Раççей Федерацийĕн административлă майпа правăна пăснин кодексĕн 17.7 статйипе килĕшӳллĕн ответ тыттарма пăхнă.

**Д. ВИКТОРОВ, район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

**Официально**

**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА**
**МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ**
**РЕШЕНИЕ**

**07.09.2007 № С-20/4**

**село Моргауши**

**О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 24.11.05г. № С-4/5 “Об утверждении Положения “О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления”**

**Моргаушское районное Собрание депутатов решило:**

1. Внести в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 24.11.05г. №С-4/5 “Об утверждении Положения “О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления” следующие изменения и дополнения:

1) пункт 3 статьи 2 изложить в следующей редакции:

« 3) налоговые и иные уполномоченные органы в соответствии с законодательством Российской Федерации»;

2) дополнить статьей 2.1 следующего содержания:

“Статья 2.1. Полномочия финансового отдела администрации Моргаушского района в области налогов и сборов:

1. Финансовый отдел администрации Моргаушского района дает письменные разъяснения налогоплательщикам и налоговым агентам по вопросам применения нормативно-правовых актов Моргаушского района о налогах.

2. В соответствии с законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах письменные разъяснения финансовым отделом администрации Моргаушского района в пределах своей компетенции даются в течение двух месяцев со дня поступления соответствующего запроса. По решению начальника финансового отдела администрации Моргаушского района указанный срок может быть продлен, но не более чем на один месяц”;

3) в статье 4 слово «отмене» заменить словами «прекращении действия»;

4) статью 7 изложить в следующей редакции:

«Статья 7. Порядок уплаты местных налогов

В соответствии с законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах:

уплата налога производится разовой уплатой всей суммы налога либо в ином порядке, предусмотренном Налоговым кодексом Российской Федерации и настоящим Положением;

подлежащая уплате сумма налога уплачивается (перечисляется) налогоплательщиком или налоговым агентом в установленные сроки;

может предусматриваться уплата в течение налогового периода предварительных платежей по налогу - авансовых платежей. Обязанность по уплате авансовых платежей признается исполненной в порядке, аналогичном для уплаты налога;

в случае уплаты авансовых платежей в более поздние по сравнению с установленными законодательством о налогах и сборах сроки на сумму несвоевременно уплаченных авансовых платежей начисляются пени в порядке, предусмотренном статьей 75 Налогового кодекса Российской Федерации;

нарушение порядка исчисления и (или) уплаты авансовых платежей не может рассматриваться в качестве основания для привлечения лица к ответственности за нарушение законодательства о налогах и сборах;

уплата налога производится в наличной или безналичной форме. При отсутствии банка налогоплательщики (налоговые агенты), являющиеся физическими лицами, могут уплачивать налоги через кассу местной администрации либо через организацию федеральной почтовой связи. В этом случае местная администрация и организация федеральной почтовой связи руководствуются и несут ответственность в соответствии со статьей 58 Налогового кодекса Российской Федерации.

Порядок уплаты местных налогов устанавливается настоящим Положением в соответствии с Налоговым кодексом Российской Федерации»;

5) в статье 8:

а) в пункте 1 слова «взыскание которой оказалось невозможным» заменить словами «уплата и (или) взыскание которой оказались невозможными»;

б) пункт 2 после слова «пеням» дополнить словами «и штрафам»;

6) абзац шестой пункта 1 статьи 10 признать утратившим силу;

7) в наименовании главы 5 слова «, а также пени» исключить;

8) в статье 11:

а) в наименовании статьи слова «, а также пени» исключить;

б) в пункте 1 слова «налогового кредита,» исключить;

в) пункт 3 признать утратившим силу;

г) в пункте 6 слово «пени» исключить;

9) в статье 12:

а) в пункте 1 слова «от одного до шести месяцев» заменить словами «, не превышающий один год»;

б) подпункт 3 пункта 2 после слова «налога» дополнить словами «, утверждения арбитражным судом мирового соглашения либо графика погашения задолженности в ходе процедуры финансового оздоровления»;

10) статью 13 признать утратившей силу;

11) пункт 4 статьи 14 признать утратившим силу;

12) в наименовании и тексте статьи 16 слова «, налогового кредита» исключить;

2. Установить, что настоящее решение вступает в силу по истечении одного месяца со дня его официального опубликования.

3. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на постоянную комиссию по бюджету, финансам, экономической деятельности, налогам и сборам Моргаушского районного Собрания депутатов (Андреев Б. В.).

**Глава Моргаушского района**
**Ю.А. ИВАНОВ.**